# КАПКĂН



**Трактăр мĕнле пĕлмен каръăк:**—Ку машшинпа ăçта кайма пулать?
**Пионер:**—Сотсиалисăм патне.



# Сойăна йуратса çыратăп

—Сойă, Сойă! Ђĕрем çăвĕ! . Шăккăлатлă канфеткка!.. Тутлăран та тутлă пĕремĕк!.. Сĕтпе пыл çăлкуçĕ!

Етемсем анђах мар, выђăхсем те сан çине, Сойă, ăшă куçпа пăхаççĕ,—сана курсан хÿрисене тăратса тăрсттин-тăрсттин сиксе хавасланса илеççĕ.

Сойăђкă! Сойĕнккă! Тĕрĕссипе каласан, Сойă! Сойă, Сойă!

Ђунăм хавалĕ хăпарса кайнипе, санăн йатна пысăк саспаллисемпех пуçласа çырнă (астăвайманнипе).

Пĕђĕккипе çырмаллађĕ, мĕншĕн тесен Сойă йатлă хĕрарăм çинђен марха, урăх сойă çинђен пырат̆ манăн ку калаври халапăм. Еп калас сойă— пăрçа майлăскер, çимелли йапала, çĕр пиђĕ çинђе ÿссе пулат̆. Етемсем те хавасланс ах çийеççĕ ăна. выђăхсемте тĕкĕшсех кавлеççĕ сойă утине, сойă çилосне, сойă вăрри ђустине.

* * *

Ваçли муђи Мускава мĕн ĕçпе пынине каламăпăр. Пынах пĕре вăл Мускава.

Ђăнкăр-ђăнкăр трамвайсем, ĕнелле мĕкĕрекен автомопилсемпе автопуссем, хуђĕсене (етташĕсене) шутланă ђухне пуç çинђи картуса çĕре ÿкерекен çуртсем, макаçăнсем, кĕтÿ пек урамри халăх Ваçли муђин ђĕрине кăрт-кăрт таптарса, пĕтĕм тăнпуçне çавăрса йани çинђен каласа паха вăхăта иртерсе тăмăпăр. Ун çинђен вăл хăй те каласа парĕ (ыйтсассăн). Урăх йышши тĕлĕнтерекен йапала курнă Ваçли муђи Мускавра.

Калас пулат̆, Ваçли муђи Мускавра пĕрремĕш хапрăк-кухђă столовăйĕнђе хисеплĕ хăнасем вађђи тунă веђђĕрта пулнă.

Хисеплĕ хăнисем камсем пулни паллах, улпутсем мар ĕнтĕ, хуçасем те мар, ĕççыннисен претставиттĕлĕсем.

Пысăк пÿлĕм. Пысăк пÿлĕмре пысăк сĕтелсем. Умĕсене шур саппунсем çакнă илемлĕ майрасем тĕрлĕрен çимеллисем вĕçи-хĕрисĕр пырса лартаççĕ сĕтеллисем çине.

Ваçли муђи, хăй умне лартнă çимеллисем çине çуллăн пăхса сухалĕсене шăлкаласа çеç ларат̆.

Малтан токлат итлерĕç. Кашни халапрах токлат калаканни сойăна асăнат̆. Сойă, тет, сойă, тет. Çаппла-çапла, тет. Пĕлесшĕн те сойă çинђен мĕн каланине Ваçли муђи, анђах вырăсла ђухлайманни касат̆. Революђутси ĕçĕнђе паллă пулнă пĕрпĕр Сойă йатлă хĕрарăм çинђен калат̆ ĕнтĕ ку, тесе тавçăрса илет йулашкинђен Ваçли муђин пуçĕ.

Токлат хыççăн, сойă йатне асăнса, пурте алă çупса кăшкăрса тăђĕç ђылайђен. „Страствуй, Сойă!—теççĕ.

Ку пулђĕха.

Çутă стакkансемпе илсе пырса, кашни çын умне коффĕ лартса пађĕç (офитсианккăсем).

— Ку коффĕне сойăран тунă, тесе вырăсла тăн-лантарса хăвараççĕ хăнасене,

Тĕлĕнет Ваçли муђи хăй те, пуçĕ те.

— Мĕнле Сойăши ку?

Хăнасем ĕçеççĕ, çийеççĕ, сойă сăмаха çăварта та кăлармаççĕ.

Умне лартса панă тирĕкрен пĕр пĕремĕке илс[е] çăвара хыпат̆ Ваçли муђи те. Премĕкĕ хыпнă-хып[...]ман ирĕлсе кайат̆ çăварта.

Пит тутлă мĕн.

— Сойă вкуснă?—тесе ыйтрĕ çумра ларакан пĕ[...]рапођђи Ваçли муђирен.

— Ку çамрăк çынăн йуратнă хĕрĕ Сойă йатл[ă] пулмалла. Мĕн манран ыйтмалла пулнăха хăй йу[...]ратни çинђен... Мăшкăласщăн мари ку манран,— тесе шухăшласа илђĕ Ваçли муђи.

Нимĕн те ђĕнмерĕ хирĕç. Çыхланнинђен çых[...]ланманни, терĕ пулмалла.

Шаккăлат, канфет... илсе çийет.

Нимĕн те ђĕнмерĕ хирĕç. Çыхланинђен çыхан[...]манни, терĕ пулмалла.

Шăккалат. канфет... илсе çийет. Ай-йай, тутл[ă]! Каллех... Тфу! Мĕнле пурте Сойăпа аташса кайнăх[а]. Сойă-шăккăлат, Сойă-шăккăлат, тесе лараççĕ на[...]măса пĕлменскерсем.

Унтан пеђђени çийет Ваçли муђи. Пеђђенийĕ тутлă, сахăр пекех. Кăна та, хăйаматла-и тен, „Сойă пеђђени", теççĕ тĕлĕнтермĕшсем. Ăçтан Сойăран пеђђени пулма пултарат̆?!

— Е-е!—терĕ шĕвĕр пÿрнине çÿлелле çĕклесе Ваçли муђи.—Е-е! Кусене пĕçерекен хĕрарăмĕ Сойă йатлă пулнă мĕн! Пĕçерме пултарат̆, мур! Курасђĕ хăйне. Мĕнлескерши?

Коффĕпе пĕрле сĕт лартса панă. Лĕпĕрт сыпат̆ Ваçли муђи. Ĕлĕк выçлăх вăхăтĕнђе Амерĕкрен кÿнĕ сĕт тутийех калат̆.

Селĕм!

Ђăтаймарĕ Ваçли муђи, —ыйтрĕ хăй çумĕнђе лараканнинђен:

— Ђйа молоко? Коровă штођ?

— Нет, не коровă. Сойăн молоко!—терĕ лешĕ хирĕç ним кулмасăр—тумасăрах.

Еккей! Хĕрарăм сĕтне çиме лартса панă. Хм!..

Хĕрарăм сĕђĕ шăвак, тетђĕç. Тутлă-иç ара ку. Тфу! Тем те çийĕн...

Мĕнле пĕр хĕрарăмăнах çавăн ђухлĕ сĕт пулма пултарнăха?! Çилли унăн ĕне çилли пекех пулĕ,— тесе йĕрĕнсе ларат̆ Ваçли муђи.

Мăйăр пекки пĕçерсе тунă. Хм!.. Тĕлĕнмелле! Кăна та Сойă мăйри, теççĕ. Ăçтанха мăйăр пулма пултарат̆ Сойăн?!

Тутлă пулин те, çийес марха кăна,-терĕ Ваçли муђи йĕрĕнсе. Çиме лартса панă ытти çимĕçсене тутанмасăрах, тăрса тухрĕ вара вăл паха сĕтел хушшинђен. Тăранмасăрах тăранђĕ.

Ытти хăнисен Ваçли муђи пек тиркес шухăш çук. Çийеççĕ пурне те. Кашнине çимесренех „Сойă тутлă" тесе лараççĕ витленĕ пек (вырăсла, конешнă). Ђей ĕçсе тăраннă хыççăн, вăйăсем пуçланса карĕç. Тем тĕрлĕ вăйă. Йурă, ташă. Çамрăксем шĕн савă-нăç!

Пĕр майра пур. Çамрăкскер! Вăй питтискер
...лмалла. Пиђĕ куçĕ... çырла шывĕпе çунă пек.
— Сойă марши ку?—тет Васли муђи.
Веђђĕр пĕтес умĕн хисеплĕ хăнасене каçхи апат
...ме ларма хушрĕç. Васли муђи те кĕрсе ларђĕ.
Çимелли вĕçи-хĕрисĕр. Малтан сўтĕн (стутĕн)
...ме пырса лартрĕç. Тирĕкĕсем ђаплă.
Вилккăсемпе çийеççĕ.
Сынсене кура Васли муђи те çиме тытăнђĕ сутĕ-
. Ай-йай' тутлă пĕçернĕ, шелмă!
— Мĕнле выђăх пуç уринђен тунăши кăна?
Хай шухăшĕ çинђен ыйтасшăн та, анђах вырăс-
пĕлменни канçĕрлет. Çапах пĕтĕм хайулăхне пух-
, ыйтрĕ-ыйтрех пĕр ватăрах хăнинђен:
— Ђево еттă?—терĕ.
Лешĕ: стутĕн, терĕ.
— Снам сўтĕн. Сўтĕнне как стелăлă? Мессă штођ?
Аптăрамалла—хытмалла! Сўтĕнне те сойăранах
...нă, тет.
— Мĕнле? Сойă пуç-уринђен тунă сўтĕне çите-
...с çукха кунта. Сойă йатлă куххарккă пĕçернĕ
...тĕ кăна...
Çапла шухăшласа ларнă вăхăтра, тĕрлĕрен и-м
...семпе тунă вĕри йашка пырса ларнă Васли му-
...умне. Кашăк илсе çиме тытăнаť. „Аш" йашки
...лнă. Мĕн ашĕши ку тутлăскер?
— Ђей йашкă? – тесе ыйтаť апат параканнинђен.
— Каккой Йашккă? Йа не Йашккă, Машшă.
...шккă в той комнăтте!—терĕ хирĕç апат паракан
...йра.
Каланине тăнланаймарĕ.
Васли муђи, тăнланмалларах пултăр тесе:
— Вот еттă ђам-ђам каккуй?—терĕ йашки çине
...рнипе тĕллесе кăтартса.
...ешĕ тăнланђĕ. Анлантарса пађĕ.
Хăйаматла йапала! Каллех Сойă... каллех Сойă-
...н тунă йашка.
Илсе пыђĕ аш тураса тунă коклет. Çисен тутлă.
...вакал ашĕ тути калаť.
Мĕн каламалли пур ĕнтĕ—каллех сойăран тунăс-
...р пулнă.
Коклет çине йухтармалли çăра шўрпене те со-
...ранах тунă мĕн.
Тата... шапшурă пулккă (кулађ). Сĕтпе çăрнă
...к тутлă. Ана та,—Сойă пулкки,—тесе çийеççĕ...
— Мĕнле хăйаматласкер вара ку Сойă?
Çăмарта хăпартни пит тутлăн туйăннă Васли
...уйăйе. Хур çăмартиши ку, ђăх çăмартиши? Ђатай-
...рĕ. Ыйтрĕ:
— Ђей йайтсă?
— Сойĕнă.
Сойă тунă çăмарта.
Ђăхăт. Пасар ђăхăђĕ. Ку та Сойăн.
Вот пыр та, калаç вăл Сойăпа! Ĕне марши вăл
...йă... Вырăссем ĕнесене çын йађĕпе ђĕнеççĕ...
Аш кукли (паштет). Паллă ĕнтĕ—ку та „Сойă
...ĕнђен" тунăскер пулнă.
Воспоти! Ыттисем хавасланса çинĕ аш кукли-
Васли муђи астивсе те пăхас темерĕ. Йĕрĕнђĕ.
Тыха ашне çисе курнă та, çын ашне çисе çылăха
...ес марха, терĕ.
Хĕрĕх йышши апат-çимĕç çитерђĕç веђђĕрта.
...шни çимĕçнех çав тĕлĕнмелли Сойăран тунă пул-
. Тĕлĕк тĕленместĕпши епĕ капла тесе, Васли
...и хăйне хăй купарђинђен çатăр ђĕпĕтсе пăхаť.
...тах ђĕпĕтрĕ. Ай!—тесе кăшкăрса йађĕ ыратнипе
...ĕм халăх илтмелле вăл.

„Ай" тенĕрен, ђирленĕ пуђ ĕнтĕ ку, тесе, тух-
тăрсем емел илсе пыраççĕ ун патне. Мĕнле йыш-
ши емел илсе пынă терĕр есĕр? Неушлĕ пĕлейме-
рĕр?! Емелне те сойăран тунине илсе пынă.

Тĕлĕнсе çак сĕтел пекех хытса каймалла вĕт
кирек кам та!

Тухтăрсем Васли муђи ал тымарне тытса йун
тымарĕ мĕнле тапнине сăнарĕç. Пăхаççĕ—Васли
муђи аллисене çумасăрах хăнана килнĕ мĕн. Алли
хапхура та, пылђăклă, тет.

Çума хушрĕç. Пит çумалли савăт патне йертсе
кайрĕç. Супăнђ пађĕç. Сойă супăнĕ ĕнтĕ çакă, теççĕ
хăйсем.

Супăнĕ те, пурте.. .пĕтĕмпех сойăран тунăскер-
сем! Акă мĕнле тĕлĕнмелле йапаласем пулаççĕ
тĕнђере!

Веђђĕр пĕтиђђенех Васли муђи çав тери пĕ-
лесшĕн çўрерĕ те, анђах тем ђул тăрăшсан та,
вырăсла ђухлайман пирки, Сойă камне—мĕнне пĕ-
леймерĕ. Пĕлмесĕрех автансем авăтнă вăхăталла
хваттерне таврăнђĕ.

* * *

Васли муђи халĕ ĕнтĕ сойă камне лайăх пĕлсе
тăраť. Тĕнђере сойăран усăлăрах ўсен-пулан
урăх çукки çинђен те, илтнĕ анђах мар вăл... курса
та пăхнă. Хăй çисе пăхнă апат-çимĕçсемсĕр пуçне,
сойăран сĕтеклĕ выђăх .апађĕ çукки çинђен те
илтнĕ вăл.

Ђăнах та ĕнтĕ, Васли муђи калашле, усăллăран
та усăллă йапала вăл „сойккă"

Ахалрен мар ĕнтĕ китайсен револђутсионерĕ
Сун-Йат-Çен çапла каласа хăварнă:

—„Китай халăхĕ телейлĕ пулĕ, мĕншĕн тесен
вĕсен сойă пур", тенĕ.

Пирĕн Ђăваш çĕршывĕнђе халĕ сойă çук та,
çапах та малалла пуласси не шанса, епĕр те лайăх-
хăнах калама пултаратпăр:

— Пирĕн колхоссем телейлĕ пулĕç, мĕншĕн
тесен вĕсен сойă пулĕ тетпĕр.

Килĕшетĕри, колхоçнĕксем, çакăн пек лосăнк
кăларса хурас тетĕп епĕ сирĕн ума:

„Акăр ăшаланă ашпа хăймаллă сĕт!"

„Акăр ђăх коклеђĕсемпе хăйма поматкисем!"

„Акăр тутлă тăпăрђăпа шăккалат!"

**Йăван Муђи.**

## Куђушша кресткомĕнђе

(Шупашкар районĕ)

—Сирĕн Куђушша крескомне хаçат пырати?

—Пыратçке.

—Хресђенсем вулаççи?

—Вулаççĕ. Креском пуçлăхĕ хăйĕн пўрт ăшђикине
çыпăçтарса тултарнă та, çавсене вулаççĕ.

Улпи

## Сутмалли йумахсем

—Хĕлле урапапа, çулла çунапа. Çав мĕн пулаť?

—Хăшпĕр йалсенђи пушар хатĕрĕсем.

Инай Ф.

## Пайанђенех

— Пайан çтена хаçаđĕ тухмалли кун терĕç,
анђах хаçаđĕ çапах та тухман.

— Ара, çтена хаçаđĕн пайанђен канмалли
кунсем пулнă пулмалла. Çавăнпа тухман.

# Пашкаҫӑ меттотист

Истори ҫакӑн пек.

Пулнӑ шкулӑн пахђи, лартнӑ унта ҫӗрулми. Кӗркунне ҫитсен хайхи ҫӗрулмисем хӑйсемех туха пуҫланӑ ҫӗр айӗнђен.

— Пулса ҫитнӗ еппин. Мӗн тӑвас, сутас ӑна!— тенӗ вара Иванӑђ Е. В.

— Кама?!

— Ђасни ҫынсене! Кашлаттарнӑ вара кашни пӑтне пӗр тенкӗпе.

Ҫитнӗ кӗркунне. Ађасем тытӑннӑ вӗренме шкулта.

— Вӗри апат!

— Ђей ӗҫтермелле ађасене!—кӑшкӑра пуҫланӑ райӗҫтӑвкомрисем.

„Какайӗ пулсан кукли пулат̆, ђусти ҫук“, тенӗ пек, шывӗ пулсан йашки пулат̆, анђах ҫӗрулми ҫук.

— Пулнӑ вӗт. Ӑҫта?

— Сутнӑ!—ответленӗ вара Иванӑђ.

— Кам хушнипе?

— Шкул канашӗ хушнипе.

— Унӑн пуҫлӑхӗ кам пулнӑ?

— Хам!

Шкулти ађасен колхосӗ лартнӑ пулнӑ ҫӗрулмине. Кашни килӗрен пӗрер штук пуҫтарнӑ вӑрлӑхне, шеремет ађисем. Иванӑђ курман ӑна. Кӗркунне йантӑ ҫӗрулмине сутма килнӗ кӑна. Сӑмсине хӗретнӗ вара куншӑн унӑнне.

Йулашкинђен ҫакӑн пек ӑс тупса ответленӗ вӑл:

— Ҫӗрулми тупрӑм, пӑђӗ икӗ тенкӗ кӑна! тенӗ вара.

* * *

Иккӗмӗш меттӑта шутласа кӑларма, хай тӗнђе ухмахӗ те ӑс ҫитерес ҫук.

— Мӗншӗн?

— Пулӑшкомран шкул ађисем вађђи вӗри апатлӑх кӗреҫе ҫӑнӑхӗ илет те... хӑв пӗҫерсе ҫи. Пулӑшкомне хӑвӑнтан укҫайӑн тӳле. Аван мар? Какшӗ, ђи ҫӑмӑл, простой меттӑт.

Йалти опђӑллӑ ӗҫсем: телекатккӑ пуххисе турӑсӑрсен йађђейккипе Осоавиахим, пурте ме тӑтсем айӗнђе хашкаса выртаҫҫӗ. Ҫийӗсене хӗл к нӗнђех курӑк шӑтнӑ. Ан йатлӑр Иванӑђа ӗҫлем тесе. Ӗҫӗсене ӑна панӑ та, анђах ҫӗнӗ меттӑтс шутласа кӑларас май ӗҫӗсене ђӗртеймен сна Приђђинӑ пысӑк та, анђах тайлӑк.

* * *

— Пашкаҫӑ—меттотис, терӗмӗри-ха ҫав?

— Ҫапла!

— Апла пулсан политтехнисӑм ку шкулта йап теттӗри тен?

— Ан лӗпӗртетӗр! Апла мар. Етемӗ мар, ӗни хутшӑннӑ кунта ку ӗҫе.

— Мӗнле?

— Рас кӗрсе кайнӑ, йе кӗртсе йанӑ-йанах тей пӗр, хайхи ӗнене шкулӑн йӑвӑҫ-ҫимӗҫ картине.

Тӑпӑлтарнӑ вара ӗне, вишни-йӑвӑҫ, хӑла ҫырл Паха, паха политехнисӑм. Кунта ҫитмен ӗнене, т та нӳхрепе ҫӗрулмисене политехнисӑмлама кӗ Иванӑђ пӗђен кӑларайман нӳхрепрен хайхи мӑ ракаллӑ технӗке. Пулӑшнӑ халӑх кӑларма. Ӗҫтер вара уншӑн ҫуттине.

Но вот, йепле пултарнӑ вӑл. Тупма пулат̆ тет ха, вулакан, Совет сойусӗнђе ҫавӑн пек пашкаҫ меттотис?

— Ҫук, конешнӑ. Пур та, архивра ун ђеккисе

— Анђах йарасах пулат̆ Иванӑђ йулташа, ҫав пек меттотиса. Пашкевиђсен курӑсне. Паха ет вӗт. Тупма хӗн вӗт ун пек пашкасене. Т ҫав тери татах та ђаплӑ „пашкаҫӑ“ пулӗ.

Унђен „Капкӑнӑн“ йеплӗ пуканӗ ҫийӗнђе, к таранђен ӗҫленине хисеплесе урра йӑтасах пула Харӑс:

— Ур-р-р-ра-а-а-а!

„—к.

# Виҫӗ ыйту

**Ҫӳктерти хӑма савӑђӗ ҫывӑхӗнђе 800 купометр ытла йӑвӑҫ хуҫасӑр выртат̆. Унӑн иртнӗ кӗркуннех Шупашкарти строиттӗлствӑна килмелле пулнӑ.**



**— Ку иртнӗ кӗркуннеренпех Шупашкар строиттӗлствине каймалли йӑвӑҫ ма халиђђенех кунта выртат̆ши?**



**— Ку иртнӗ кӗркунеренпех кунта кил выртмалли йӑвӑҫ ма халиђенех килсе выр манши?**

**„КАПКӐН“. Строиттӗлствӑ ӗҫӗ ҫине йапӑх пӑхакансем ма сулӑп йухса кайманши?**

# Урӑххине тумасан...




**Технӗккӑна ҫавӑрса илме ђӑрмантаракан технӗккӑ.**

# Хӑйматлӑхсен каманти

– Ђӑнах та, Куҫма кум... Мӗн манер те пулсан ума пулӗши?—йапшаррӑн хуђӗ сӑмахне Савук, уҫлӑха ђеркке тыттарнӑ хушӑра.

– Мошнӑ... Паранкӑ ҫинђен пайанах актӑ ҫыратӑр... А, тырӑ... тырӑ ҫинђен конешнӑ, хурт ҫисе анӑ тесе сайавлени парӑн.

– Килӗшетӗп... йӑл кулса йађӗ Савук.

Актӑ ҫинђи сӑмахсем питӗ ҫыпҫуллӑ, йака ҫырӑна тирӗнђӗҫ. Ђеркке хыҫҫӑн ђеркке йӑванса пуҫлӑӑн ђӗрине ҫемҫетрӗ. Тулли кӗрекери ӗҫме-ҫимепе ӑсланнӑ майӑн ҫырӑннӑ актӑ вуланаť:

– „Епӗ Пуҫсӑрпуҫ йалканаш пуҫлӑхӗ Иванов уҫма пайанхи кун краштанин Йӑванов Савелин атш алӑха ҫӗраллӑ пӑт паранкӑ ҫирӗп сатанипе памала пулнӑ. Анђах, ун пӗр паранкӑ та йулман,—веҫ шӑгӑкра шӑнса кайнине хам ђӑн куртӑм, тесе акӑ актӑна алӑ пусса ҫирӗплететӗтӗп. Иванов К.“

Кун йевӗр актӑсем пӗрре ҫех мар, пит нумай лавнов алли виттӗр ҫырӑнса, кӑнтселерти хулӑм тела“ ӑшне ҫӗленсе купаланнӑ.

Ивановӑн кум Савук анђах пулман, вӑртахсем, унђӑкамсем, хӑйматлӑхсем ,,хамӑрӑннисем“ пуре пулнӑ унӑн.

Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Пуҫсӑрпуҫ йалӗнђе пурӑнакан ухӑнсемпе вӑтамсем ӗсӗклесе ,,савӑннӑ“, вӑртахсемпе хӑйматлӑхсем савӑнса „макӑрнӑ“...

Вӑхӑт ӗлӗкхи пекех иртнӗ ҫемӗн иртсе пынӑ. Уркуннепе кун вӑрӑмланнӑ май, ҫӗр пӗтӗмпех ӗскелсе йулнӑ. Ҫавӑнпа та пирӗн Иванов ҫӗрле ывӑрса тӑранайман шайне, кӑнтӑрла куҫ-пуҫ ҫутипе ывӑрса картне лартнӑ.

Тӳпере кайӑксем ҫураки кӗвви каланӑ. Иванов ӗсен кӗввине йышӑнман:—Суйаҫҫӗ вӗсем, халех арха вӑл, тесе каллех лӑпкӑ ыйӑхпа ӗнтӗркесе ывӑрса кайнӑ.

Хӗвел, хӗртнӗ пӑшатанпа хӗртнӗ пек, Пуҫсӑрпуҫ йалӗ ҫине пӑхнӑ. Хӗвеле хирӗҫ йурайӗнђен пуҫӗсене кӑларса трийӗрпа сортировккӑ пӗрин ҫине пӗри хурланса пӑхса ларнӑ.

Ҫак вӑхӑтрах йала прикатирсем килсе кӗнӗ. Иванов вӗсене курсан шартах сиксе вӑранса кайнӑ. Вӑранса кайнӑ та, каланӑ.

— Ей, ђӑн прикатирсем, тенӗ,—Епӗ вӑрлӑхсене полђшевиксем пек тасаттарассишӗн нумай тапаҫлантӑм. Анђах ђухӑнсем итлемеҫҫӗ. Хусамӑрта пӗлетӗр, ман пӗђђен мӗн тӑвас? Арӑм йӑвӑр ҫын... Тата тӗрлӗрен кампанисем нумай пуҫа антратрӗҫ.

— Ҫаплах пуђ, ҫав, тенӗ лешӗсем „телӑ“ ӑшӗнђи актӑсене пӑлхатса.—Епӗр сан йӑвӑрлӑхусене районтах илтсеђђӗ. Ҫавӑнпа сана пулӑшма килтӗмӗр.

— Йураť... Йураť... плакотару..

— Патшалӑх вађђи тырӑ хатӗрлесси, аш-какай хатӗрлес ӗҫ, тата ытти хатӗрлӳсем те мӗнле пыраҫҫӗ-ха сан, Иванов йулташ?...

— Аванах пыраймаҫҫӗ... Йал ђухӑн вӗт...

— Кулаксене панӑ ҫирӗп сатанисем мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пыраҫҫӗ?..

— Ҫӗркаҫ ҫекреттарпе шутланӑђђӗ .. 13 прођђӑн тулнӑ курнаť.

— Мӗске-е-ер?!

Пуҫсӑрпуҫ йалӗнђе епӗ нумай пулмасť пултӑм хаљ йал йатне улӑштарса ,,Ҫӗнӗ вӑй“ йат панӑ. ,,Ҫӗнӗ вӑй“ 37 хуҫалӑхпа пӗрлешсе ҫӗр кастарнӑ.

— Иванов хӑйматлӑхӗсен камантине кӑкласа пӑрахсан, пирӗн йал веҫех урӑхла сывла пуҫларӗ. Ҫапах вӗсен тымарӗсем йулкаланӑха. Анђах вӗсем пирӗн ӗҫе ђӑрмантарма пултараймаҫҫӗ. Пирӗн вӑй ҫирӗп. Пирӗн йыш кулленех ӳссе пырасси шанђӑкра, тесе савӑнӑҫлӑ калаҫрӗ манпа „Ҫӗнӗ вӑй“ колхосӑн претҫетаттӗлӗ.

**Митта Петӗрӗ.**

# Çирĕп сатани

Непĕссĕр Вихтăр йулашки куркине ӳплентерсе сĕтел хушшинђен тухрĕ те, ĕне ђĕђђи пек кӳпђесе тăракан пӳрнисемпе питĕ хăвăрт, шăрăх вăхăтра пусмăрланă шăна-пăвансене хăваланă пек, сахалран та çамкипе хырăмĕ çине тăххăр хĕрес хуђĕ. Унтан, хăйĕн пĕђĕк ађинђен хуг, кăранташ, тата шђут илсе, шалти пӳртре тăракан сĕтел хушшине кĕрсе ларђĕ.

— Ивађук арăмне... пилĕк кун çурă ĕçленĕшĕн— икĕ пăт та вунă кĕренке. Куçука, икĕ кун утă çулма тухнăшăн—25 кĕрепенке те виç ђĕрĕк. Хамăра 190 пăт йулаť. 100 пăтне çу уйăхĕнђе, йе ута тухас умĕн пасара кăлармасăр мошнă.

Вихтăр пĕђĕк ађа пек хĕпĕртенсе кайрĕ.

— Есĕ мĕн шутлатăн, старик?—сĕтел çинђен ђашăк-тирĕк пуçтарса çӳрекен карђăкĕ унтан ађаш сассипе ыйтрĕ.

— Çĕрулмине шута илсе хурас, тепха карђăк. Йалсоветне çĕрулми хатĕрлес тĕлĕшпе хут килнĕ тет. Пĕлетĕн вĕт: ыйтма пуçлĕç акă...

— Вĕсене тăрантса çитерес çук ку ђухне: пар та пар... Ех, самана!..

— Ан та кала карђăк. Хĕстермеллипех хĕстере пуçларĕç. Ĕнер ав ђухăнсен пухăвĕнђе пире те кулаксен шутне кӳртме пикĕннĕ тет.

— Иртнĕ пасарта çĕрулми мĕн хака çитнĕ ?етĕнха?..

— Хаклах мар-ха, карђăк: виçĕ тенкĕ кăна. Çу уйăхнелле 10 тенке çитĕ тесе калаçкалаççĕ.

— Çĕр пăт хăварса, ђипер, çĕртме уйăхђен мĕнђђенех усрасан...

Непĕссĕр Вихтăр карђĕкĕ кайсан хăй тĕлĕн мăкăртатма пуçларĕ.—100 пăт. Пăђĕ 10-шар тĕнкĕрен... Сахал мар!..

Вихтăр хăйĕн шухăшĕпĕ хула пасарне кайса ӳкрĕ. Утă çийĕ. Хăлхара—никамăн та çĕрулми таврăш çук. Акă вăл (вăл кăна. Урăх никам та çук!) Пр-ск пасарне иккĕпе çĕрулми тийесе тухнă. Шахťарсем улма лавĕсене кăткă пек сырăнса илнĕ... Ывăлĕ виçсе парса ĕлкĕреймесť. Вăл хăй, çурхи хĕвеле хирĕç урапа пуçне хăпарса ларнă та, каççир пек ђервонтсăсене шутласа анђах лараť.

Çак вăхăтра Вихтăрăн кĕлет умне сăнђăрпа кăкарса хунă Улайки вĕрме пуçларĕ.

— Кам шуйттанĕ çĕр вăхăтĕнђе сĕтĕрĕнсе çӳрет? Ирĕккĕнрех пĕђђен ларса ĕçлеме те памаççĕ,—шухăшларĕ вăл.

Пӳрте, папкине хул хушшине хĕстерсе, йалсовет претçетаттĕлĕ Усманăв килсе кĕђĕ.

— Е-е! Усманăв есĕçке вăл! Киљах, кил. Кĕтменђĕ. Ирт, ирт тĕпелелле.

Претçетаттĕл хуçа аллине ђăмăртанă хыççăн папкине сĕтел çине хурса темĕскер шырама пуçларĕ! Ђылайђђен ђакаласан пĕр хут татăкĕ туртса кăларђĕ те, Вихтăр умне хуђĕ.

— Ку мĕн йапала?

— Ку, Вихтăр Матвейђ, сохраннăй расписка, Пайан сана советра... твĕртий сатани памалла тунă. Урапа çулĕпе санăн, стантсăна 90 пăт çĕрулми илсе каймалла пулаť. Покка хăвăн патрах усратăн.

— Ну-у? Суйатăн пуљ Усманăв? Ăçтан ман... 90 пăт... Ха ее... А, Камсем ăна апла?... Кам хурс[...] терĕ?

— «Кам, кам». Паллă ĕнте. Хăвах пĕлен...

— 90 пăтах снађђăт?

Ну, тавай ђасрах алă пус та... Фу, ђорг воçми[...] Тӳсме çук—пуç ыратаť...

— Пуç ыратаť тетĕн-и çак? Ха есĕ... Тарй[...] Тарйĕ, теп, илтетн-и?

— Мĕн тумаллаши тата ĕнтĕ!?

Пăхкалаха есĕ унта: йулмани пăртак Усманă[...] йатне! Хурђĕсем те кăçалхи çул пылне питĕ саха[...] пађĕç... Пур йенђен те çитменлĕх: акă 50 пăт ул[...]ма тĕпсакайĕнђе тăнă, çĕртех шăнса кайнă,

— Ну, ђасрах, Вихтăр Матвейђ. Ман тата[...] çитмелли çĕрсем пур.

— Халех, халех, Иван Ваçилђ. Ей! карђăк! Ђас[...]рах пул ес унта. Сăри те... Мăнкунран йулнăске[...] кăна.

— Ниушлĕ есир, мана, сăра ĕçме килнĕ тес[...] шутлатăр? Епĕ сăра ĕçмĕп...

— Што ты, што ты, Иван Ваçиљђ! ӳпкелес[...] каймалла пулĕха. Пăртак ерехĕ те пулас пулаť.

— Ăнланаймарăн ес мана, Вихтăр Матвейђ[...] Епĕ сирĕн пата хăнана килменĕçкеха, ĕç тум[...] тесе килнĕ. Ф фу турран килешĕ! Пуç мими çаплах[...] çурăлса кайаť пулĕ...

— Ниђђево, ниђаво. Хе-хе-хе... Пулаť вăл, пу[...]лаť. Ман хамăн та ĕлĕк, старăстăра çӳренĕ ђух[...] нимĕн сăлтавсăрах пуç ыраткалађђĕ.

Кĕске вăхăтрах сĕтел çине патейĕнпе ерех-сăра[...], аш, тутлă пыл килсе ларђĕç. Вихтăр карђăкки çам[...]рăклансах карĕ: 17 çулхи хĕр пек йăпăртатса шал[...]ти пӳртре тулти пӳрте кускаласа çӳрет.

— Киљха, Иван Ваçиљђ, ĕçсе парха.

Усманăв (çийелтен) туркалашса, кађкланса т[...] пăхрĕ т .. Анђах, ыратакан пуçа ăçта кайса тӳр[...]летен?

— П тĕ хĕн ку ђухне йал пуçлăхĕ пулса ĕçле[...]ме,—Усманăв хăйĕн çинђен калаçма пуçларĕ.

— Курап, курап Ив. Ваçилђ. Хаљ вĕт ĕлĕкх[...] мар. Сăмахран ак, çĕрулми миçе пăт хатĕрлемел[...]ле-ха?

— 600 пăт.

— Тоттă. А ăна мĕнле тултармалла? Манран[...] 90 пăт ыйтаççĕ, терĕниха?

— 90.

— Ай-ай-ай! Ун ђухлĕ парса пулмасť. Ху пĕлен[...] вĕт... Ĕç, ĕç, ĕç... Ĕçха, ĕç.

— Каккуй ес сашитăђнăй апла! фу-у... мĕнл[...] сăра ку сирĕн? Пĕтĕм çанçурăма çӳçентерсе йараť[...] Хăватлă ђорт воçми!.. 50 пăт та параймастни?

— Çук, çук, çу-ук. Каларăм вĕт-ха.

— Ну миçе калас... 30 пăт парăн ĕнтĕ.

— Çук, çу-ук.. Ăçта ун ђул! Еçха, ĕç Ваçил Ив[...]анђ... Ей тăн-пуçу: Иван Ваçиљђ тесĕме... Шăнса[...] карĕ вĕт ман улми. Ĕнер карђăк йурийех сысна[...]сене кăларса парса пăхрĕ те,— вĕсем те çимеççĕ[...]

— Ну... 20 пăт п арăн ĕнтĕ.

— 20 пăт мар—10 пăт парăп ĕнтĕ айта. Хам[...] выçах тăрса йулап та... Çынсенђен йулас мар[...]. Ĕçха ĕç куркине!.. Ĕç!

— Ну, йурĕ. Шăнса карĕ тетĕниха? Ех!.. Çиђђас[...] актă çырăпăр. Майне пĕлен ес. Вихтар Матвейђ

# Политехнисатсилеççĕ

— Стой, хамах уçатăп!—кăшкăрса вăранҫĕ хура тинĕс çинҫи карап пек сарлака куйккă çинҫе выртакан Клементйĕв уҫҫитĕл.

Аллинҫен тĕлĕкре ерех пуштавне уçмасăрах туртса илнĕн туйăннипе кăшкăрса йанă вăл. Уншăн Клементйĕва айăпламăпăр. Тĕлĕк темĕнле те курăнма пултарат, анҫах кам мĕн çинҫен ытларах шутлат, çавăн çинҫен тĕлĕк те ытларах курат.

— Ах, самана, ĕçессе те ĕçнĕ çавă ĕнер ҫиперех. Çутă таса çут çанталăк тӳпи кăвак сурăх тирĕ пек, сарă хĕвел тутăхнă витре тĕпĕ пек курăнат. Акă пайан апла мар, ҫӳреҫине уçса ирхи хĕвеле мухмăр сӳрĕк куçĕсемпе йĕплесе тыха таппи пек ҫăрканă пирусне ҫĕртсе йаҫĕ.

— Аптранă кăçал ку политехнисатсипе. Политехнисатси, колективисатси, реалисатси, машшинисатси, тфу!.. тата мĕнле ТСИ пурши?—ĕнер пушатнă ерех пуштавĕсене пăхса илҫĕ Клементйĕв уҫитĕл.

Тир каткинҫе çĕрнĕ кушак тирĕ пек ерехпе çĕрнĕ ҫĕри кăрт-кăрт тапса илҫĕ. Клементйĕв ларҫĕ. Апатланҫĕ. Шăл хушшине пулнă какайне тасатрĕ.

— Ну, аҫасем, пайан сире политехнисатси вĕрентетĕп,—сăмаххине сапрĕ аҫасем çине.

— Мĕнле кĕнеке çинҫен?—харăс ыйтрĕç аҫасем.

— Кĕнекепе мар, ахалех.

— Мĕнле ахалех,—тĕлĕнҫĕç аҫасем.

— Ăнланмастăр пулсан ман пӳлĕмрен илсе тухăр ҫейник, пуштавсем, пукан, кирпĕҫĕ, палҫто, краççын лампи трупи, тата ыттине те, тесе карланкине хырсах кăшкăрҫĕ Клементйĕв.

Кĕрсе карĕç аҫасем тĕркĕшсе уҫитĕл пӳлĕмне, йатса тухрĕç йапала сахалран пĕр лав.

— Мĕн вĕренетпĕр?

— Çейҫас! Çейҫас, ан васкăр, васкасан...

— Ну вот, ĕçе тытăнтăмăр.

— Халĕ итлĕр. Есĕр аванах пĕлеттĕр, халҫхи пурнăçра çитĕнсе пыракан çамрăксем ĕçе вĕренмелле, ĕçе вĕренмесĕр йулмалла мар. Ĕçе вĕренсен çурăм çийĕнҫе çакса çӳрес çук. Çак ман пӳлĕмрен илсе тухнă йапаласене халĕ пирĕн çĕнетмелле, йусамалла, тасатмалла. Пĕр сăмахпа ĕçе вĕренмелле, политехнисатсиленмелле. Кам мĕн тăвас тет?—кăшкăрҫĕ Клементйĕв.

— Епĕ ҫейник тасататăп!

— Епĕ краççын ламппи!

— Епĕ, епĕ мĕнҫеха, ее.. епĕ палҫтто саплатăп.

— Епĕ те!—кăшкăраççĕ аҫасем. Ĕçе тытăнҫĕç. Кирпĕҫĕ хăйраççĕ. Ҫейник тасатаççĕ. Çаннисене пĕтĕрсе трупа варрипе ҫиксе трупа тасатаççĕ. Парттăран пăта кăлараççĕ, пукана çапаççĕ. Темте темте тăваççĕ. Шакаççĕ хыйраççĕ, çĕлеççĕ, пĕр сăмахпа ĕçлеççĕ.

Клементйĕв политехнисатси пурнăçа кĕнипе хĕпĕртенĕ, шкул умĕнҫе, хырăмсене шăлса кулкаласа уткалат. Шкул йанрат, çĕмĕрлет, сасси таçтах илтĕнет.

— Пĕтертĕмĕр!—кăшкăрҫĕ аҫасенҫен пĕри уҫҫитĕл умне пырса.

— Лаааатнă, кĕрĕпĕр,—тесе уçса хупрĕ уҫҫитĕл тутине.

— Кайатăр пулĕ киле,—ирĕксĕр кăшкăрҫĕ маҫҫаран урайне çитеҫҫен тусан тулнă класа кĕрсе уҫҫитĕл Клементйĕв.

Аҫасем килелле саланҫĕç. Хăшĕ кăмака трупи виттĕр тухнă пек, хăшĕ автан пуснă пек хĕпхĕрлĕ йун пӳрнисене йĕплесе пĕтернĕ. Кашни аҫанах сăмси шăтăкĕсенҫе çуршар кило тусан, хăрăм, хăйăр, тата темте.

Ку урок аван мар, малала та кунашкалах пулсан епĕ шкулран пăрахатăп,—çул çинҫе йумахлаççĕ аҫасем.

* * *

Çапла ăнланаççĕ хăш пĕр уҫҫитĕлсем политехнисатсилле вĕренгес ĕçе. Политехнисатси ҫăваш шкулĕнҫе икĕ çулхи тăванĕ пулин те хăш-пĕр уҫҫитĕлшĕн ҫĕнмен хăна. Çакна вулакан йулташ: таварланă кирлĕ мара, тейĕ. Вулакан йулташ, ĕненместĕн пулсан айтаха Шетмĕ таврашне.

— Шетмĕ-пуç шкулĕ политехнисатси ĕçĕ мĕнле пырат?

— Пĕлтĕр кĕркунне шкула колхос çумне çыпăçтарсаҫҫĕ те...

— Вара усси пулҫи?

— Тем...

— Тивĕш шкулĕ, сирĕн мĕнле?

— ?

— Мăн-Шетмĕ шкулĕ—сирĕн?

— Колхосра машшинсем курсаҫĕ.

— Кивйал шкулĕ, сирĕн авани?

— Ыйтуне ăнланмастăп.

— Карай шкулĕ?

— Нта-а, политехнисатси шуткă мар çав вăл.

— Сирĕн мĕнле?

— ?

Сирĕн тата?

— ?

— Мĕн илтĕн пайан пасарта?

— Алтăр илтĕмха.

— Мĕн тăван алтăрпа.

— Политехнисатси вĕт, тесе кулаççĕ хăшпĕр уҫҫитĕлсем.

Ĕçе тытăнар? Ан çилленĕр **Сӳпенкке Илли.**

---

Тĕпсакайĕнҫе шăнса кайнă тĕрĕниха? Çиҫҫас. Пĕр татăк хут шел штолĕ пире! А, мана пĕр... пĕр .. 10 пăтне параймăни? Ну, кивçен пек туса конешнă.

— Мĕн калаçмалли пур унта, Иван Ваççилҫ... Саншăн пулсан... Хамăрăн вĕт. Пуç сыв пулсан... Ес—мана, епĕ—сана... Алла хирĕç алă çăват вăл. Тавайха пĕрер йуррине шăрантарса илер. Тарйе! Тарйе! Кĕр пирĕн пата. Пăхха пирĕн умра ыр сын тăрат. Хăвăн аллупа пĕрикĕ курка парса илха... Иван Ваççилҫ! Ҫунăм.

Ĕçкĕ алтансем авăтаҫҫенех пыҫĕ. Сăмахсем пыл пек йухрĕç. Иван Ваççилҫҫăн ыратакан пуçĕ тахçанах иртсе кайре. Вăл—йурларĕ те, ташларĕ те... Йулашкинҫен ура çине те тăрайми пулҫĕ.

— Вихтăр Матвейҫ! Савнă сыннăм! Ох-х! Пуç çаварнат... Тавай мана лашапа леç! 10 пăтне те ан пар! Илтетĕн-и? Пĕр улма та ан пар!

— Илтесси игетĕп те... 10 пăтне парас пулат. Нелçа. Çынсенҫен йулма кирлĕ мар.

Непĕсĕр Вихтăр йат тирĕнҫен çĕленĕ алсатулне тăхăнҫĕ те, хăйĕн ҫĕнмен хăнине леçме, лаша кӳлме тухса карĕ. **Еселе Петĕрĕ.**



**Кулак:**—Кравул! Путатăп! Çăлăр!

**Оппорттунис:**—Тыт вĕрентен!

# Халап шур сат çинђен

Халап нумайĕшĕ кивелнĕ. Хаљхи хĕрӳллĕ ĕç вăхăтĕнђе ĕлĕкхи шур вăкăр халапĕ етем кăмăлне каймасť. Етем кàмăлне хирĕç пырса шур вăкăр халапне шурă сат халапĕ туса улăштартăм. Пуçлăпăр çапла:

Çитрĕ, тет, тăхăрçĕр çирĕм тăваттăмĕш çул. Çуркунне ылттăн сурпанпа ăшă çил варкăштарса сивĕ хĕле хăваласа йађĕ, тет.

Уђђителĕ çу уйĕхĕн çутă кунĕнђе вăрман праçникĕ çинђен çуласа çаптараť, тет:

— Йалсем йешĕл тум айне пулђĕç: шкул çуртне шур улмуççисем сарăлса тĕрелĕç; çынсем вăрман ырлăхне пахалама вĕренĕç.

Каланă-тунă. Çĕнĕ ĕмĕтпе тулнă ађасем вăрман ађисене амăш кăкринђен уйăрса. пĕђĕк йăвăçсене шкул пахђине усрама пађĕç, тет. Пулас сатшăн ђикесĕр савăннипе уђђителĕпе ађасем пĕр „пĕђĕк“ ĕçе—шăвăрса (пăхассине) астума манђĕç, тет. Тен çавăнпатăр сивĕ кĕркунне çитсен, йала йешĕл тум айне путармалли йăвăçсем хăйсем ђиссăр пылђăк айне путрĕç, тет; шкула витсе тĕрелеме пулнă улмуççисем телейсĕр хуçăлса хура тăпрана тĕреленђĕç, тет. Уђђителĕпе ађасем пĕрпĕрин хурлăхлă шухăшне сиссе, сат çинђен хускатмарĕç, тет... тата тепĕр çулђђен. Çитрĕ, тет, тăхăрçĕр çирĕм пиллĕкĕмĕш çул. Ыталарĕ, тет, çĕре çуркунне. Йăл кулакан хĕвел, йешерме тытăннă вăрман праçник çинђен татах асгутарђĕ, тет (пĕлейместĕп лайăх, тен, комсомол йађейкки астутарнăтăр). Тытăнђĕç, тет, пурте çĕнĕрен. Çурхи тивлет ђĕртрĕ, тет ĕмĕт; кăларђĕ тет, йăвăç папаккине. Çуллахи хĕрӳ хĕвел çуласа типĕтрĕ, тет, йăвăç сĕткенне. Кĕрхи сулхăн шăнтрĕ, тет, ĕмĕте; кăштă вăхăтсăртарах шăварђĕ, тет, хăрнă туратсене.

Çитрĕ, тет, тăхăрçĕр çирĕм улттăмĕш çул. Савăнса çитрĕ, тет, çуркунне; Татах вĕçрĕç, тет, хĕрӳллĕ сăмахсем, татах çунђĕç, тет, кăварлă ĕмĕтсем, татах тытăнђĕç, тет, „мухтавлă“ ĕçсем.

Тĕмерсе çитрĕ, тет, кĕркунне. каллех манăçрĕç, тет, илемлĕ сăмахсем, каллех сӳнсе кĕлленђĕç, тет, ĕмĕтсем, каллех тăлăххăн ларђĕç, тет... хăрăк йăвăçсем.

Çитрĕ, тет, 1927 мĕш çул. Хăнăхса çитрĕç, тет, ађасем йăвăçсене пĕрре ђĕртсе хăртма.

Çитрĕ, тет, 1928 мĕш çул. Ађасем вĕреннĕ йăлана пăрахмаççĕ, тет, çĕнĕ йăла кăлармаççĕ, тет.

Çиртĕ, тет, 1929-мĕш çул. Çитрĕ, тет, çуркунне...

Çитрĕ, тет, 1930-мĕш çул. Халап пуçламĕшĕнђен иртрĕ, тет, ултă çул. Вăл йал çыннисем вĕренмен тетха вăрман ырлăхне пахалама.

Çитрĕ. тет, 1931-мĕш çул . . . . . . . . . . (халапа кĕркунне пĕтерĕпĕр).

. . . Акă сире хамăр йал çинђен халап. Ытти йалсенђе ун йышши халап те пур та, пирĕн пурах вара. Çук мар. Пытармастăп — хурлăхлă халап.

Куљттурлăх çуккине пĕлтерекен халап.

**Елли Йехремĕ**

# Пăру ђăмланă

Пăру тесен пирĕн калаçмалли пайтах. Ăна лайăх ăрантарса усрама пĕлесси, контрактатси тăвасси, амрăк пăрусем пусакансемпе кĕрешесси, тата ытти е. Пуçпа шутлакан çынна аса килмелли майĕ те ур, калăпăр, кулак акитатсийĕ хыççăн кайакан-ем пулсан. Акă илĕр Вырăс-Нăрваш, Вутапуç алĕçтăвкомсене. Кунта 20—30 пуç пăру какай пул-ă вĕт!

Кунта пăрусене саранђа тырра пĕтерне пекех ĕтереççĕ. Тĕлĕнмелле 20—30 пуç ĕне катăлђĕ! Сă-ăрçă, ђистийех сăтăрçă. Килĕшўсĕр ку! Тытăм пайĕ ытти тăрăх штрав туманни татах та килĕшўсĕр. авăн пек хăвăртлăх çухатнăшăн тытăм пайне хăй-тыткаласа пăхсан та йурамалла. Питĕ аван улĕђђĕ.

Епĕ ытла таçтах кĕрсе карăмха. Ман урăххи нђен каламалли пурђђĕ.

— Е-е, пăру!—тесе кăшкăрађђĕ мана Маçак кай-лли çĕре ђас кайаймасан.

— Пăру пек кунĕн-çĕрĕн ђăмлан, йытă хырăмĕ,— ђђĕ анне çук çулхине йĕкел пашалуне кавленĕ ух.

Ђăнах та пăрушĕ те ђăмлаť çав. Такама, теме ђăм-са йарĕ. Çынна ђăмланинех шарламаççĕ те, план млание нумай илтнĕ вара. Акă Мăн-Вылă шкулне спектăр Сороккĕн ĕçе тĕрĕслеме ђашкăрса çитрĕ Ахуу!

— Сирĕн мĕнле ађасем питĕ сахал?

— Пайан... пайан... мĕн... халсăр,—хирĕç тыттарђĕ Миронăвă.

— Сирĕн ађасене йепле çўренине тĕрĕслемелли спискă пури?

— Çук, çĕркаç пăру ђăмланă.

— Мана ĕçлемелли план пури?

— Ăна та ђăмланă, пĕрлеђђĕ вĕсем.

— Мĕн ĕç тунине çырни пури?

— Каланă вĕт сана—пăру ђăмланă тĕсе!—кăш-кăрса тăкрĕ Миронăвă.

Инçпектăр ним тума та пĕлмерĕ. Пĕре çеç çулталăк хушши ађасем пуш трупа шаккаса ларнине курса тухрĕ те, лав çине улăхрĕ.

— Пăру ђăмланă. Тĕленмелле вĕт! Мăн-Выл уђ-ђитлине хăйне, Миронăвăна пăру ђăмламан-ши? Пĕлтĕр те уна çапла пăру ђăмланă пулĕ. (Вăл пĕл-тĕр, инспектăра кађђăсем вăрласа кайнă, тесе суйрĕ).

Çакăн пек плансене, ĕçсене пăру ђăмлани пирĕн ђасас-ђасах пулаť. Хăш-пĕр колхоссенђе плансене ĕçе шута илессине, укçа-тенкĕ расхут тунă хутсене тошĕ пăру ђăмлаť.

Шелмĕ пăрушĕ! Çакăн пек çынсене хăйсене те пăру ђăмланă. Вĕсен ĕçĕсене те пăру ђăмланă. Çакă пăру ђăмланине пĕтересђĕ. Ан ђăмлатăр вăл урăх.

Пăру хырăмĕнђи плансене ĕçсене калла илекен ăçтаçă: **Çикнал.**

# Трактăр макăраť

Çĕрпў районĕнђи „Сталин“ комунăра трактăрсем, йапăх тытнă пирки, стройран тухса пыраççĕ.



— **Ма йĕрен, трактăр тус? Сана йĕрни килĕшмест: есĕ, вĕт, ђи пысăк куђттурлă машин.**

— **Куђттурлăх çук пирки йĕретĕп.**

# Еç технĕккипе паллашманран

Ват карђăк пек лăђăр-лађăр, ик çĕртен тĕленĕ хурал пўрђĕ халăхпа ђăк тулнă. Ђĕлĕм тĕтĕмĕ ламппă çуттине хупăрласа лартма тăрăшнă. Сывлама та йăвăр.

Пĕтĕм вăйĕпе çухăрса, çăварне карса пăрахсах шефран килнĕ прикатир toклат тăват. Пыр типсе ларсан ĕçме ун умĕнђе пĕр витре шыв хатĕр. Те çăварĕ макнит пекех туртнăран, те ытла пит хашканипе, унăн çăварне пăйав пек йавăна йавăна кĕрет тĕтĕм. Халăх çăварĕсене карсах итлет. Кашнийех хăлхисене тăратнă.

—..Вот, йулташсем, пирĕн кайа йулнă технĕккăна вăйлатмалла. Технĕк тĕлĕшĕпе ђи малта пыракан капиталисла патшалăхсенђен çак кĕске вăхăтрах иртсе каймалла...

... Пирĕн колхоссенђе технĕк тĕлĕшĕпе ĕçлеме пултаракансем сахалтарахха. Çавăнпа та пирĕн кашни колхосрах ĕç майĕсене вĕренмелли крушоксем уçмалла. Епĕр пайан сирĕн колхосра та кун пек крушок уçасшăн. Кулленхи ĕçре сире пулăшма сăмах паратпăр, тесе пĕтерђĕ хăйĕн токлатне прикатир.

— Технĕк?.. Мĕнле çын вăл?

— Пирĕн касри пуђ ара...

— Çук, вăл мар... Текнĕк тет вĕтха.

— Тĕнехпи пуђ еппин.

— Технĕккă, Тĕнехпи мар,—тўрлеткелерĕ пĕри,

— Мĕскер вăл?—шавларĕ пуху.

— Технĕккă вăл, конешнă, техниккă...

— Машшинсем... Савăт ĕнтĕ... ăнлантарат прикатир.

— Ну кам кĕрет крушока, ыйтрĕ пуху пуçлăхĕ, пуху пăртак шăпланнă хыççăн.

— Мана çыр!..

—Антри Типпуçăв!

— Астуманăв!

— Вĕçкĕнкей!

— . . . !

Халăх çурхи шыв пек шавланипе прикатир тухса шăвăннине никам та сисмен.

* * *

Пĕр уйăх иртрĕ ĕнтĕ прикатир тухса шăвăнни. Анђах крушока тĕлĕкре те курмаççĕ. Ун çинђен пурте маннă.

Астуманăв крушокăн пуçлăхĕ. Вĕренессе те нумай вĕреннĕскер—таплитсă умношенине пĕлет пулмалла.

Акă пайан çак „вĕреннĕ пуç“ вĕрентнипе сĕлĕсене формалинпа çăваççĕ.

Тепĕр виç ернеренех ак çуракине тухмалла вĕт, хатĕрлесе хурас, теççĕ.

— Астуманăв пиђђе, пире уђђитлĕ формалинпа халех çума йурамаст, тет, акас умĕн анђах çумалла... атту шăтмаст, тет,—терĕ пĕђĕк çăварĕпе пĕђĕк çеç ађа.

— Е-ей, ђĕпĕ!.. Мĕн пĕлен есĕ молокосос. Акана тухас ђух урăх ĕç çук штолĕ. Унђух „сухое протравливание“ текенни те тумалла. Урăх ĕçсем те мăй таранах.

— Шыв пĕтрĕ.

— Ăсса кил çырмаран. Асту... Тарасаран мар, вăл ĕçме те сахал.

— Астуманăв, ку пактери ик сехет тăђĕ ĕнтĕ шўсе кайат пуђ, кăлармалла мари?

— Хурђĕсем вилтђĕрха лайăхрах.

— Апла пулсан вĕри шыв йарас.

— Пулсан вађай!..

* * *

Тимĕрç лаççи умне пĕр трактăра пиллĕк лаша па турттарса анђĕç.

Темле ухмахĕ ватса пăрахнă ĕнтĕ.

Тўрлетекен çук. Трактăрисĕ хулана кайнă. Хаçатсем çинђе çуракине полђшевикла хатĕрлемелле тесе çухăрнипе, трактăра тўрлетме илсе килнĕ. Ваннипе ванманнине пĕлме хĕн, анђах пирĕн утарнĕк ђуптараймарĕ.

Лашисене тăварсанах тимĕрç лаççинђен мăлатуксем йăтса тухрĕç.

Анђах аппаланнă хушăра пĕр утарнĕкĕ таçта пырса лектерђĕ. Трактăр аслати пек кĕрлесе тапранса та кайрĕ.

— Пултаратăп!—çухăрђĕ Астуманăв.

Хăй савăннипе транк! сикрĕ çўлелле. Виçĕ аршă сикрĕ пулĕ.. виççĕ.

— Ай-ой!.. Тытăр, тытăр, çырмана сикет, тытăр!..

— Кара-у-ул!..

Трактăр çине хăпарса ларнă тимрĕç ытла та хăранă. Хăй сикме те хăрат, ним те тăваймаст.

Астуманăвпа тепĕр икĕ утарнĕкĕ кўлсе килнĕ вĕренрен йарса тытнă та пĕтĕм вăйĕпе туртаççĕ. Лещ, вăйлăскер, ђарăнма мар, тата хытăрах сĕтĕрĕ пуçларĕ. Çынсем темĕскер курнă пек тĕлĕнсе кусĕсене ђарса пăхса йулаççĕ.

— Пулăшăр!—çухăрђĕ Астуманăв. Анђах çак хушăра трактăр шырлана çавăрăнса та ўкрĕ. Астуманăв трактăр урлă палт! кайса ўкрĕ месерле. Хăй хăранипе куçĕсене алтăр пек ђарса пăрахрĕ. Тапаланђĕ.

Тепĕр çиђĕ кунтан, трактăрис курсран килсе асаплана-асаплана кăларнă вара трактăра.

* * *

Каллех епĕр паллашнă хурал пўртĕнђе пуху. Кунта хађ токлат тума районтан акроном килнĕ.

— Ыран-пайанах акана тухмалла, сирĕн вăрлăх таврашсем хатĕри?—ыйтат акроном хăйĕн токлатне пĕтернĕ хыççăн.

— Пурте хатĕр,—пуринђен малтан çухăрђĕ Астуманăв.

— Епĕр вăл вăрлăха тахçанах фармалинпа çуса хунă.

— Мĕнле?!—тĕлĕнђĕ акроном.

— Мĕн „мĕнли“... Астуманăв хушнипе, терĕ пĕри хĕрарăмĕ.

— Капла тума йураман!—Хыттăн çухăрђĕ акроном

— Мĕншĕн?—хăравçă сасăпа шавларĕ пуху.

— Малтан çуса хунă вăрлăх шăтмаст.

Ну-у...

— Мĕн тумалла ĕнтĕ?

— Пĕтрĕмĕр!

— Мĕн акас?

Пуçĕсене кăтăртатарсах хыçрĕç колхоснĕксем.

# Вĕсен криттĕкĕ

Халап çаккăн пек пулат. Çул çӳресе пăхнă пулĕ ĕнтĕ есĕр те. Çула тухсан тем те курса илтен, шеремет. Халапа суйеçтарес мар. Ђан сăмахăн кукри çук тенĕ. Кукăртас мар, конешнă.

Çитсе кĕтĕм, снаш, Лапра-касси йалне (Йетĕрне р).

— Каш-каш каш-каш!

— Шав-шав-шав!—шавлаççĕ сасăсем хăлхара. Мĕн сĕрлет, хурт-хăмăри мĕн,—уйраймастăп. Йулашкинђен:

— Тасататпăр!

— Çаклататпăр!

— Пулат, пулат! Ленктеретпĕр!

— Тин çитрĕ-ха вăхăт!—тенĕ сасăсем илтĕнме пуçларĕç.

— Пĕçертеççех вĕсене, тенĕ сăмахсене манăн урлă хăлхасем уйăра пуçларĕç.

Тапкаланса пыратăп урлă урамсемпе коппеpативпатнелле.

„Все на чистку и проверку советско-хозяйственных апаратов“, тесе пысăк саспаллисемпе çырнă плакатсем хăлаçланса кăшкăраççĕ кунта.

— Нта, совет аппараđĕсен тасатăвĕпе тĕрĕслĕвĕ-иç пайан кунта. Çавăнпа кашлат хытах йалăн хăшпĕр сăйĕ класĕ,-- ăнлантăм вара.

Епĕ те уттартăм.

— Ну тасатупа—тĕрĕслӳ хăçан?—ыйтрăм пĕр çынран урам тăрăх пынă ђух.

— Тасатăва васкатпăр, — тени илтĕнђĕ.

* * *

Пуху пухăнђĕ. Уçăлђĕ. Ĕçе тытăнђĕ. Пур йалтан та пухăннă кунта: Çимек-касси, Ту-касси, Лапра-касси.

— Тавай калаçăр,мĕн çитменлĕхсем пур йалканăшĕн?—ыйтрĕ комиççи пуçлăхĕ.

— Пулмасăр ара, пур! Аттене сурăх патшалăха партарђĕç...

— Манăнне налук ӳстерђĕç!—çаплаттарђĕ Хĕрлĕ Ңађак.

— Ма илмелле мар! Вĕсен ĕлĕк çĕр тара илсе пурăннăскерсем! — кăшкăрса тăкрĕç хирĕç ђухăнсем.

— Çавсем тĕрĕс ĕçлемеççĕ, советсем,—терĕ тимĕртăмăрпа сутă туса пу рăннă ђĕйелĕхпе сасă çухатмасăр пулнă Çитăрмак Мĕтри.

— Ан калаçтарăр ăна!—кăшкăрђĕç пĕр харăс ђухăнсем.

—Епĕр ђухăн пурăнатпăр. Аттене кулак тесе налук тӳлеттерђĕç!—ђевĕлтетрĕ сăмахне Тавит Марийĕ

— Ман пиђђене кулак турĕç. Тошĕ тĕрĕс мар!—вирлĕнех çаптарђĕ хурш—усси Хĕветĕрĕ.

— Ђухăнсем мĕн калаççĕ кун пирки?—ыйтрĕ комиççи.

— Совет тĕрĕс тунă. Пиђђĕшĕ унăн ђăн-ђăн кулаках. Çурђĕ-йĕрĕ сала пек. Сутă тунă... Тата тарçăпа пурăннă...

— Мана сулăм укçи нумай тӳлеттерђĕç...

Çапла çатлаттараççĕ вĕсем. Комиççи те асăрха пуçларĕ касене.

— Ђухăн, патрак, колхоçнĕксем, сире мĕнле „ыраттарати“ йалсовет?—ыйтрĕ комиççи.

— Пире нимĕн те. Налук таврашĕ тӳлемен. Кирлĕ пулсан мĕн пур пеккине парат. Çитмен йапалана ăçтан тупас советăн та. Çĕршыва интустрилемелле вĕт хађ. Вăхăт çăмăл мар!— ответлерĕç кăсем.

— Колхоссем тата?

— Колхоссене тĕреклетмелле, çуракине хастар хатĕрленмелле!—теççĕ пире.

Нумай, нумай калаçрĕç. Йулашкинђен калаçакансем пĕтрĕç. Комиççи канашлăва карĕ.

* * *

— Ленкрĕç пулĕха!

— Нута ленкрĕç.Çавăн ђул каласан та ленкмесен...

— Никамăн та мар, манăн вырăнлах пуђĕ калани. Епĕ каланă ђухне, шăтарас пек пăхрĕ мана куçран комиççи. Йулашкинђен:—ђарăн, терĕ. Асăрхарăри?—çатăртатрĕ Мĕтри.

Ђухăнсем кулаксене вирлĕрех „отпор“ памалли çинђен калаçаççĕ.

* * *

Комиççи хăйĕн йулашки сăмахне каланă ђухне хайхи „тӳнтер криттĕксем“ çаварĕсене ђана вĕçсе кĕрес пек карса итлерĕç. Куçĕсене комиççирен вĕçертмерĕç.

Йулашкинђен комиççи кулаксемпе поткулађнĕксемпе вирлĕн кĕрешмелле. Тӳлевсене кулаксенђен виçĕ кун хушшинђе шыраса илмелле. Ђухăнсене хыттăн пĕрлештерсе кулаксем çине çирĕп наступленни тумалла, терĕ.

Пуçĕсене ланђ усрĕç „криттĕксем“. Лаштăр шанђĕç хăмпусем.

— Пирĕн пулмариç!—терĕç вĕсем тин.

— Сирĕн пулмарĕ çав, пулас та çук нихăçан та!—терĕм епĕ те кулак криттĕкĕсене. Майак.

---

— Сирĕн крушок мĕн ĕçленĕ?

— Мĕнле крушкă?

— Крушкă мар, крушок.

— Утарнĕксем пури кунта сирĕн?

— Пур!

— Астуманăв крушок пуçлăхĕ—„утарнĕк“.

---

Акроном килсе кайнă хыççăн ĕç тинех выçарăнтан тап ранђĕ. Колхçнĕксем пурте йалхуçалăх крушокĕнђе вĕренеççĕ. Крушока йертсе пыма маттур çын тупса панă.

— Ĕç майĕсене вĕренни кирлех çав пире... Кирлех.

— Астуманăв пеккисемпе ĕç тухмаст ĕнтĕ.

— Вăрлăх та ахалех пĕтрĕ...

— Тислĕк те çурхи шывпа йухса карĕ.

— Пурте хамăр пĕлменнипе пулђĕç кусем,—ӳкĕнеççĕ колхоçнĕксем.

Ĕç технĕккине вĕренни кирлех çав... Кирлех Ăна пĕлмен утарнĕк—утарнĕк мар.

**Ту‚туш Венипе Йанкар.**

# Çĕрпӳ районĕнҫи Паваркасси йалĕнҫи политехнисăм

Апрелĕн 22-мĕшĕнҫе, халăх ĕçĕпе пырса кĕтĕм Çĕрпӳ райĕçтăвкомне. Ҫунăм ҫатаймарĕ çут пайне кĕмесĕр, епĕ пырса кĕнĕ вăхăтра çут пайĕнҫе Ĕнрушшов инçпектăр пĕҫҫенех шкулсене йама хутсем çырнă та, хĕрлĕ ҫернилпа алă пусса ларат. Пĕрпĕринпе палгашрăмăр та, халăха вĕрентес ĕç мĕнле пыни çинҫен каласма тытăнтăмăр. Çав вăхăтрах темиçе уҫитлĕ пĕрле çут пайне пырса кĕҫĕç, вĕсенҫен пĕри Паваркасси шкулĕнҫе вĕрентекен уҫитлĕ Трихвăнăв йулташ.

— Кам ывăннă—ларăр, терĕ Ĕнрушшов пырса кĕнĕ уҫитлĕсене, пушă ларакан пукансем çине кăтартса.

— Епĕ ывăннă, ларасха,—тесе пырса ларҫĕ Трихвăнăв.

Мĕн тăван, кашнин хăйĕн ĕçĕ вĕт, Трихвăнăв Ĕнрушшов сĕтелли патне пырса ларсассăнах, политехнисăм мĕнле пыни çинҫен инçпектăр ыйта та пуçларĕ.

— Ну мĕнле сирĕн унта политехнисăм ĕçĕ пырат.
— Аван пыратха, хаҫ аҫасем пура пураççĕ.
— Мĕн пури вара пуратăр?
— Пурасассăн мĕн ваҫҫи пулĕха, хаҫ нимĕнне те пĕлместпĕр.
— Есĕ кĕнекесем, шурналсем, хаçатсем вулатăни?
— Вĕсене нумай вулатăп.
— Мĕнле шурналсем вулатăн?
— Шурналсен йатне аса илеймерĕмха.
— Есĕ вĕсене çырăнса илетне?
— Çырăнса илетĕп çав, илетĕп.
— Мĕн йатлă шурналсем илетĕнха есĕ?
— Темлеҫҫĕха çав, йатне астумастăп.

Епĕ тĕлĕнсех хытса кайрăм. Хам пуçăмпа: ех, пĕҫик ҫунсем, мĕн пураççĕши, пӳртши, кĕлетши? тесе тĕлĕнсе лартăм. Кун çиҫен епĕ мар, Ĕнрушшов та тĕлĕнҫĕ пулас, çавăнпа та вăл малалла çапла каларĕ: халĕ пура пурани, шкула политехнисăм йеннелле çаварни мар. Хаҫ камăн мĕн ҫухлĕ пуррине, йал çĕрĕ çине мĕн ҫухлĕ кирлине, вĕсене тасатни тасатманнине шута илмелле. Вăрлăхсене тасатман пулсассăн тасатмалла, хормалинсемпе çумалла тата ытти те, терĕ. Суха пуçсемпе плукăсем тĕлĕшпе ĕçлемелле, вăрлăха шăтарса пăхасси, пахҫа-çимĕçсене шăтарасси, халĕ вĕт тем хăйамаҫĕ те пур терĕ.

Пĕр сăмахпа каласассăн: „Школа должна повернуться лицом колхозному движению" терĕ.

— Та! Та! Ман кăçал 1-мĕш круппă çех, çавăнпа пура патĕнҫе те ман аҫасем ĕçлемен, тепĕр уҫитлин Апрамăвăн анҫах ĕçленĕ.

— Майăн 1-мĕшĕнҫе пур шкулăн та халăха рапăрт памалла. Мĕн ĕçленине ĕçхресҫенсем пĕлҫĕр.
— Есĕ отношшени çырса парха, епĕр ăна тăватпăр.
— Ĕсĕ меттăт пройектă çинҫен вулани?
— Уна нумай вуланăха.

Çак сăмахсем хыççăн политехнисăмпа меттăт пройектăвран урăх сăмах çине куçрĕç. Çапла вара Трихвăнăв калаçса ларнă çĕртех пура пурарĕ, кайран тата пура çумне пырса та тĕкĕнмен пулҫĕ. Шурналсене нумай çырăнса илсе вулат пулин те, мĕнле шурнал илнине, мĕнле шурналсем, хаçатсем вуланине те пĕлмест. Трихвăнăв ĕçлемесĕрех нумай ĕçленĕ пулашшăн, анҫах та хăйĕн мухтанни çинҫен пăрахăçа тухрĕ.

Манăн пура çинҫен пĕлес килет, çавăнпа Трихвăнăв пушанаҫҫенех кĕтрĕм.

— Есир мĕн пуратăр ара?
— Вите.
— Миçе выҫăх ваҫҫи?
— Темиçе выҫăхлăх пулатха.
— Пысăкăи?
— Пысăк мар, меттăр тăршшĕ, меттăр урлăшĕ.
— Мĕн çӳллĕ тунă?
— Хаҫ виçĕ йĕрке çех пуранăха.
— Мĕнле йăвăçран пуратăр?
— Виçĕ вершук пысăкĕш ăвăс пĕренесенҫен.

Шалт тĕлĕнсе хытса кайрăм. Епĕ малтан çынсем пурăнмалли пӳртсем çинҫен, выҫăх хупмалли витесем çинҫен шухăшлани йăнăш пулҫĕ.

Трихвăнăв уҫитлĕн пури пĕр меттăр тăршĕ, меттăр урлăшĕ çех пулнă.

Çапла ĕнте Павар касси шкулĕнҫи уҫитлĕсем шкула политехнисăмлас вырăнне хвостисăмлаççĕ. Политехнисăм çинҫен ăнланманха.

Мĕн ăнланҫăр, кĕнеке хаçат вулама пĕлмеççĕ, уҫитлĕсене мĕнле шурнал кирлине, мĕнле шурнал вуламаллине пĕлмеççĕ.

Малашне те çаплах пурăнсассăн Павар касси шкулĕнҫи уҫитлĕсене шкула вĕренме йамалла.

**Тивĕш çынни.**

---

# Мĕн акан—çавна выран

**Ваç. Лепĕтĕв-Кумаҫ.**

Прох Луккиҫ Оппортунистăв
Йуратаҫҫĕ, ҫĕлхине
Ним ҫармасăр, пуринпе те
Кĕвĕçме йе хирĕçме.
Йаланах вăл çухăраҫҫĕ
Аппарат, хĕçӳ çинҫен ..
Луккиҫа кĕç-вĕç тасатрĕç
Хăйнех хăйен ĕçĕнҫен.
Мĕн акан—çавна выран,—
Халап вырнаçуллă,
Есĕ акрăн-тăк ыраш—
Шăтса тухмĕ тулă.

Пуп пулнă атте Акакки
Сăмахсем сармашкăн —çпетс,
Сĕмленет вăл: пакки-пакки...
„Пиллĕк" ку ҫуна илет...
Епĕ тĕлĕкре ахаҫ-и
Енер куртăм христуса..."—
„Пророка" çампах мĕн халĕ
Йанă таçталла хуса.
Мĕн акан çавна выран,—
Каланă пит маçтăр.
Латăнсем аксан ыраш
Уйхирте шăтмасттĕр!

Профрапотнĕк Оплыççейĕв,
Хускатмасăр хăй пӳне,
Ир те каç çаранăн акрĕ
Формалисăм вăрлăхне.
Акрĕ, акрĕ... çил те тăвăл!
Исхоташҫи—уй-уй-уй!
Темскерле ҫиркуҫарпа вăл
Кĕç пĕтерҫĕ хăйне хăй.
Мĕн акан—çавна выран,—
Вăл паллă кашнишĕн.
Хутсенҫен хунаттаран
Татах хутсен йышĕ.

## Кӗнекесем алӑра

Хӗрлӗҫутай районӗнҗи Турнепе Анатри Макарин йалӗсенҗе осоавиахим мӗнне те пӗлмеҫҫӗ Анланта-ракан ҫук.

Мӑкла Петӗр халӑх пуххине пырса кӗрсе:

— Кам осоавиахим җленне ҫырӑнаҭ!—тесе ҫу-хӑрса йаҗӗ.

— Мӗн тума кирлӗ вӑл йапала?

— Мӗн тума кирли... сирӗн ӗҫ мар. Ҫырӑнатӑр тӑк, ҫырӑнӑр.

Шапакуҫ Кӗркурийӗ:

— Вара җленсене книшкӑ параҫҫи?—тесе ыйтрӗ.

— Тоттӑ паратпӑр.

Муклашкӑ Караҗӑмӗ, книшкӑ паратпӑр тенине илтсен, книшкӑпа ҫитсӑсем, тапаксем илетпӗр тесе, шухӑшне виҫ-тӑватӑ хут хӑй пуҫӗнҗе ҫавӑрҗӗ те мӑн сасӑпа: мана ҫыр, терӗ.

Ун хыҫӑн: мана ҫыр! Мана ҫыр... тенӗ сасӑсем вӗҫӗ-хӗрисӗр йанӑрса карӗҫ.

— Шуйтан ҫыннисем... малтан ҫырӑнмастӑр. Халҗ ҫырма хут та ҫитмест,—тесе вӑрҫаҭ.

— Епӗ малтанах кӑшкӑрнӑҗӗ, ҫыртӑни, ҫыр! Кусемпе ҫитет, терӗ те тухса вӗҫтерҗӗ килелле Мӑкла.

* * *

Муклашка карҗакӗ тепӗр ҫулталӑкран Мӑкла патне пырса:

— Ку кӗнекепе ним те памаҫҫӗ—ни тапак, ни супӑнҗ... тесе вӑрҫаҭ.

Мӑкла Петӗр тарӑхнӑ сасӑпа: сана кам унпа тапак параҭ тенӗ, тӑмпӑшал, тесе ҫухӑрса илҗӗ.

— Апла пулсан осоавиахим тенин җленӗсене пуху мӗн пулати?

— Пуху туса җӑрманмастпӑр.

Җӑрманасшӑн мар ҫав. Җӑрманасшӑн мар пулсан хамӑр җӑрманар—Мӑклана пуҫ-урипех йӗплӗ ҫӑмах хуранне җиксе кӑларар. **П. Эрккес.**

## Шӑршӑллӑ йал

Кӑшар-касси йалӗ. Аслӑ йал. Йал тӑрӑх тухнӑ җух, темӗнле усал шӑршӑ, сӑмсана пырса тӑрӑнҗӗ. Мӗн шӑршиши ку тесе, сӑмса шӑтӑкне җакаласах шӑршла-рӑм, ҫук, нийепле те мӗнне пӗлмелле мар. Тӑрсах шӑршлатӑп, ҫук,каллех пӗлеймерӗм. Темӗнле усал шӑршӑ ҫураҭ сӑмсана. Тӳсмелле мар усал шӑршӑ. Җатаймасӑр аптӑранипе, ку йалта Макар кум пурҗӗ-те, ҫавӑнта кӗрсе пӑхас тесе, унталла утрӑм.

— Макар кум, мӗн шӑрши ара сирӗн йалта, җӑт-малла мар, сӑмсана ҫураҭ, терӗм.

— А, вӑл-и, вӑл истори ҫапла пуҫланса кайнӑ. Пирӗн йалта иртнӗ ҫул, ҫӗр ҫине пысӑк хуран җавса, ӳнта 900пӑт „волҗтмӑн“ текен суртлӑ ҫӗрулми, тата тепӗр 500 пӑт суртсӑрри, ҫуркуннеҗен пиҫсе тӑтӑр тесе хунӑҗӗ. Хӗлле ун патне, пӗр җӗрӗ җун та пырса пӑхман. Темӗнле пурӑннӑ вара вӗсем? Ун ҫинҗен пӗр исторӗк те пӗлмест. Халӗ вара кӑларса пӑхсан, те хӗллехи вӗрипеле, те ҫу йанӑран, ҫав ҫӗрулминҗен, пин те тӑватӑҫӗр пӑт нимӗр тухнӑ. Нимӗрне хуртсем анҗах ҫиме пултараҫҫӗ, урӑх нимӗнле җӗрҗун та ҫийемест. Шӑршӑ пӗр ҫухрӑмранах ҫынна антӑратаҭ. Халӗ ҫав шӑршӑ йала сарална та сывлама ҫук усал-йӳҫӗ. Ҫитменнине тата, ытти йалсене ҫиле май вӗҫсе кайса, аптӑратаҭ теҫҫӗ, терӗ те, хӑйӗн историне Макар кум каласа пӗтерҗӗ.

Пирӗн шухӑшпа ку историйе кунтах пӗтермелле мар. Вӗҫлемелле. Вӗҫлемешкӗн йал пуҫлӑхӗнҗен тытанмалла. **Инай Ф.**

## Сивӗрен

Шупакшарта тухакан пур шурналсем те вӑхӑтра тухса саланаймаҫҫӗ вулакансем патне. „Сыхӑ тӑр“ шурнала февралҗ уйӑхӗшӗн тухни майӑн 24-мӗшӗнҗе тин йалсене саланҗӗ.

**Расумӑв ӳкерҗӗкӗ**




**Шурналсӑрри:**—Мӗншӗн есӗ ку шурнала илнӗ-и, мен хулхушшине җикрӗн.

**Шурналли:** Ку № хӗллешӗн тухнӑ та, халҗ алла сивӗ.

## Темӗнле сас

Ийук, ийук, ийук, ийук!..

Ай-уй мӗн сассиши ку? Ванҗккӑпа Санҗккӑ пытанмалла выҗҗаҫҫӗ-ши мӗн? Ку Ванҗкки Санҗкки марха. Таҫта ҫав Тӑрӑн (Шупашкар районӗ) йалсовет умнелле илтӗнет. Ийук, ийук!.. Ах мӗнши вара ку ҫаплах кӑшкӑраҭ. Мӗн пирӗнтен пытанаҭши ара? Ийук, ийук, ийук, ийук!.. Тавайха, Лекҫей, патнех кайса пӑхар. Мӗнши вӑл?

Так, айта тенӗскер шалалла кӗретпӗр. Кӗнӗ ҫемӗн сасӑ вӑйлансах пыраҭ. Ийук, ийук, ийук!.. Ну хамӑн та, темскер пулҗ тесе, хӑранипе хӑлха җӗтреме пуҫларӗ; тӑр, тӑр, тӑр, тӑр, тӑр, тӑр, тӑваҭ шеремет хӑлхи мӗн тӑвас тен? Ак хайхи кӗнҗелерех кӗретпӗр. Пирӗн претҫетаттӗл пӳртре темӗн пулнӑ пек хыпаланса җупаҭ. Лекҫейпе иксӗмӗр те тӗлӗнсе хытсах кайрӑмӑр...

Ара шелмӑскерсем йалхуҫалӑх крушокӗпе пытанмалла выҗҗаҫҫӗ пулнӑ мӗн. Леш йалхуҫалӑх крушокӗ папкӑ хушшине кӗрсе ларнӑ та, ийук та, ийук, тесе пытанса лараҭ. А претҫетаттӗл никак тупаймаҫт. Шел претҫетаттӗле. Шел! Тӑрӑн ҫамрӑксем, җухӑнсемпе патраксем, тупса парӑрха претҫетаттӗле... кирлине. **Җаршалски.**




## У-у-у!

— У у-у!—Уласа йӗрнӗ сӑсӑ илтӗнет.

— У-у-у!

— Уа-уа!

— Хӑҫан улама пӑрахӑши ку?

Иртсе ҫӳрекенсем ҫуртне кӗмесӗрех мӗн уланине пӗлеҫҫӗ. Хӗрхенеҫҫӗ вӗсем улаканнине.

— Ҫук. Илтмеҫҫӗ вӗсем уланӑ сасса: хӑлхисем ҫук вӗсен...

Йепреҫ райӗҫтӑвком шкапӗнђе шкулсем тӑвас план кунӗн-ҫӗрӗн уласа выртать. Никам та ӑна пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртес тесе тӑрӑшни палӑрмасть. Районӗпе 4 шкултан пӗрне ҫеҫ тума пуҫланӑ.

Шелӗр, шелӗр плана! Ӑна шеллемеллех. Райӗҫтӑвкомра лараканнисене хӑшӗсене шеллемесен те йурать,—вӗсем лайӑхрах хӗртсе йарасса кӗтеҫҫӗ пулмалла.

## Сутӑ тӑвакан претҫетаттӗл.

Раҫпискӑ ленкрӗ пирӗн алла. 50 тенкӗлӗх раҫпискӑ. Акӑ вӑл:

Расписка на 50 рублей

Я Председатель Липовского Сельисполкома Любимов Данил таю настоящая росписка гр-ну д. Новой Николаеву Георгию в том что я от него получил пятьдесят (50) рублей за свою любимая девки что и подписуюсь

Подписка Любимов

Йалсовет претҫетаттӗлӗ хайӗн хӗрне 50 тенке сутнӑ, мӗншӗн тесен унӑн (претҫетаттӗлӗн) ӑсӗ пит нумай,—укҫа ҫине хурса хисеплесен 0,00001 пуслӑх лап пулать.

## Нумайа хапсӑнмаҫҫӗ.

Лонтонра мар, Паришра та мар, Ђӑваш республӗкӗн шӗкӗр хулинђе—Шупашкарта пулса пырать ку ӗҫ.

Шупашкарти йалхуҫалӑх снапшени пайӗнђе йалсенђен, йе ытти орканисатсисенђен ђӑвашла килнӗ хутсене урӑх хут ҫине вырӑсла куҫарса ресођутси хурса параҫҫӗ.

Унта слушӑшђисем хушшинђе ђӑвашсем 15 прођђӑн ытларах анђах.

— Ма сахал?

— Ҫитет унпа та пире. Епӗр нумайа хапсӑнаканскерсем мар.

Нумайа хапсӑнмаҫҫӗ унти пуҫлӑхсем. Пӗрер хуран йӗплӗ ҫӑмах ҫитерсен те ҫитӗ вӗсене.

## Ҫукран пур.

— Ҫукђӗ. Халӗ пур.

— Пур пулсан аван вара.

— Аван мар ҫав. Карӑк-ҫырма (Хӗрлӗђутай районӗ) копператтив отеленинђе растраттӑ тенӗ йапала ҫукђӗ, халӗ Каврил Наштанӗв прикашђӗк 485 тенкӗ те 25 пус растраттӑ тунӑ.

— Пултарать.

— Мӗн тума? Растраттӑ тума-и?

— Ларма.

## Вывӗскӑ пур.

— Йурать пирӗн вывӗскӑ пур. Ђӑваш промвӑрмансойус тесе ҫырнӑ вывӗскӑра. Вывӗскӑ пулмасан мӗнлеђђӗха вара...

— Тата пысӑкрах вывӗскӑ ҫыртармалла. Укҫа парсан Марттӗнс хутошнӗк пӗр самантрах ҫырса пама пултарать.

Ђӑнах та Ђӑвашпромвӑрмансойусӗн хайӗн вывӗскине пысӑклатмаллах пулать. Пуринђен ытла „Ђӑваш“ тенӗ ҫӑмаха пысӑкрах саспаллисемпе ҫыртармалла. Ахалӗн унта... ђӑваш слушӑшђисем ӗҫлени палӑрмасть. Вывӗскӑпа та пулин палӑртмалла.

Унта ђӑваш слушӑшђисен хисепӗ 1929-мӗш ҫулта 54 прођђӑн ҫурра йахӑн пулнӑ. 1930-мӗш ҫулта 10 прођђӑна йахӑн ђакнӑ (46, 6%).

— Ђакнӑ ҫав, ђакнӑ. Ђакман пулсан ђакмасђӗ те, ђакни хупларӗ, терӗ вӑл уђрештенире пӗр слушӑшђи пирӗн сотрутнӗке хирӗҫ ним каламалли ҫукран. Ракла кайалла ђакакан уђрештени вӑл.

## Хӑйӑр пеккарнисем.

Технӗкканӑ алла ҫаварса илме хушакан лосӑнка пурнӑҫа кӗртме...

Ҫук, унпа мар пулмалла—урӑх сӑлтавпа. Сӗнтӗрвӑрри хула копператтивӗ хӑйӑртан ҫӑкӑр пӗҫерсе пӑхнӑ. Ҫӑкӑрне ҫыннисем ҫийесшӗн пулман. Акт ҫырнӑ. 4 пеккарнӗре пӗтӗмпе 846 кило ҫав хӑйӑрпа тунӑ ҫӑнӑхран ҫӑкӑр пӗҫерсе ђылай упыткӑ курнӑ. Актӑра ҫапла ҫырнӑ;

„Хлеб оказался негодным для употребления, в виду того что в муке оказалось 10% песку, согласно исследования, в лабалатории. Размол муки был производен Пушкиным и Агатеевым“...

„Сахӑрнӑй пессок“ тесе йанӑ ӗнтӗ ҫӑнӑх ӑшне вӑл хӑйӑра.

Вӑл хӑйӑртан епӗр йӗплӗ ҫӑмах турӑмӑр та, „славнӑй“ ҫийеҫҫӗ тӑмҫамкаллӑ ҫынсем (ҫӑнӑха пӑхмасӑр илекен райпо правлени ђленӗсем).

## Шулӗк уђитлӗ.

А. Ваҫҫилйӗв ҫырать:

Пӗлтӗр хӗлле Ҫӗнађђари (Канаш районӗ) потроскӑ шкулӗнђе Кипеђ ађи Александрӑв йатлӑскер пулнӑ. Халӗ вӑл таҫта хӑйаматалла ҫухалђӗ—никам та пӗлмест. Анђах пӗђђен ҫухалман ку. Унпа пӗрле укҫасем те ҫухалђӗҫ йалти ҫынсенђен —200 тенке йахӑн, ађасен копператтивӗнђен—130 тенкӗ, Ђӑвашкайӑккӗшӗк сойусӗн Канашри кантурӗнђен—55 тенкӗ, тата йалти тӗрлӗрен орканисатсисенђен—42 тенкӗ.

Тупас пулать ӑна. Тупмасан?.. тӗрме макӑрса ларать уншӑн.

## Ҫук ҫитменлӗхсене пӗтерни.

Пулать ун пекки пуҫ ӗҫлемен вӑхӑтра. Акӑ Шупашкар райӗҫтовкомӗ 3009 номӗрпа ҫырнӑ хут.

Уполномоченному РИКа т. Карачуринскому.

План децентрализованной хлебозаготовка по вашему СИКу на 15 марта с/х задание по ржи—13,35 цент. выполнен-15,32 цент., прочие культуры-1,32 ц., выполнение—1,75 ц., задание по овсу—9,31 ц. выполнен—10,68 ц., каковое является результатом полнейшего вашего бездействия, потому РИК предлагает в 24 часовой срок ликвидировать прорыв, в противном случае...

Замест. Председ РИКа (ал пуснӑ)

Райсоюз (ал пуснӑ)

Ку хут тӑрӑх, пирӗн шухӑшпа, пӑхмасӑр алӑ пусакансен пуҫӗнђи „прорыва ликвитирӑвӑт“ тумалла.



Ҫак йурӑхсӑр етем пек, сысна ҫине «сысналла» пӑхакансем, «Капкӑнӑн» ҫитес номӗрти «йӗплӗ ҫӑмах хуранне» кӗрсе ӳкрӗҫ.


САМАР ХУЛИНЂЕ ТУХАКАН ЂĂВАШЛА ХАҪАТ

# „КОЛХОҪНӖК"

**Кашни ђӑваш килӗнђех пултӑр!**

**ПСК(п)П Вӑтам Атӑл крайӗнђи комиттеђӗпе крайӗҫтӑвкомӑн оркӑнӗ**

**„КОЛХОҪНӖК"**

**уйӑхра 12 номер тухса тӑрат̆**

**Февраԓ уйӑхӗнђен пуҫласа хаҫат форми пысӑкланђӗ**

**КОЛХОҪНӖК** тӗнђери лару-тӑрусем ҫинђен, хамӑр ҫӗршывра сотсиалисӑм тӑвас ӗҫ йепле пыни ҫинђен, парттипе правиттӗлствӑ йышӑннӑ постановленисене ҫутатса парат̆.

**КОЛХОҪНӖК** колхос йухӑмӗн ђеретлӗ ыйтӑвӗсене, колхосри ӗҫсене йепле йӗркелемеллине ҫутатса парат̆.

**КОЛХОҪНӖК** халӑх хушшинђи т рлӗ ҫитменлӗхсемпе кӗрешет, вӗсене сирсе пыма майсем кӑтартса парат̆.

**КОЛХОҪНӖК** парттин тӗп ҫулйӗрне пӑсакан тӗрлӗ тӗслӗ оппортуниссемпе, кулаксемпе пупсемпе, ҫектантсемпе, пӳрократсемпе, волоккитђӗксемпе мӗн пур клас тӑшманӗсемпе вирлӗ кӗрешет. Ҫак сийенлӗ елементсемпе вырӑнсенђе кӗрешме пулӑшат̆.

**Пурте ҫырӑнса илӗр „КОЛХОҪНӖКЕ!!!"**

**ХАКӖ ПИТӖ ЙӲНӖ:**

**Уйӑха 20 пус, 6 уйӑха 1 т. 20 пус, ҫулталӑка 2 т. 40 пус.**

**АТРӖСӖ: Самара, Ленинградская 36—38.**



Ответлӑ ретактӑр **А. Ваҫилйӗв.**

Упол. Чувашглавлита № 724    Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза    Заказ № 697 Тираж 11.700 экз.

# Акӑ мӗн пирки пулнӑ вӑл

**МТС тиректӑрӗсем трактӑрсемпе усӑ курас ӗҫре ҫителӗклӗ ӗҫлемен. Ҫавӑн пирки трактӑрсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗҫӗккӗ (25—30 проҫҫӑн ҫеҫ) пулнӑ.** (Ҫӑваш Опком пӳровепе ОКК преҫитийумен пӗрлешӳллӗ ларӑвӗ 17—V йышӑннинҫен).




**Ҫак ҫулсене ҫапса ватма пурте аслӑ поххота хастарлӑн тухар!**